ЧР Вĕренӳ министерстви тата республикăри çамрăк тĕпчевçĕсемпе специалистсен канашĕ „Чăваш Енри чи лайăх çамрăк тĕпчевçĕсем” конкурса пĕтĕмлетнĕ. Конкурса аслă професси пĕлĕвĕ паракан 7 учрежденипе 1 предприятирен 21 ĕç тăратнă. Унта 40 çула çитмен ăслăлăх докторĕсемпе кандидачĕсем хутшăннă.

Çĕнтерӳçĕсене виçĕ номинацире палăртнă. Çут çанталăка тĕпчекен çамрăксен йышĕнче Иван Бардасов /И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ/ тата Елена Саперова / Чăваш  патшалăх педагогика университечĕ/ мала тухнă. Техника ăслăлăхĕсем енĕпе „Чи лайăх çамрăк тĕпчевçĕ” ята Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче ĕçлекен Ольга Михайлова тивĕçнĕ. «Гуманитари ăслăлăхĕсем» номинацире Санкт-Петербург патшалăх экономика университечĕн Шупашкарти филиалĕнчи Стелла Григорьева çĕнтернĕ.

**А.АНДРИЯНОВ. Газета «Хыпар». 2013. 9 февраля.**